Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнченпе тухать

18 (7872) № * Юн кун, 2011 çулхи пуш (март) уйăхĕн 16-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ

## Ачасен канăвĕнче унăн тӳпи те пур



*Алина Николаевна Данилова район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕнче вăй хурать. Чăваш патшалăх педагогика институтĕнчи пуçламăш классен факультетне пĕтернĕскер малтанах Калайкассинчи вăтам шкулта тăрăшнă. Кĕçĕн классене вĕрентнипе пĕрлех шкул библиотекинче те ĕçленĕ.*

*Халĕ вара тăрăшуллă специалист ĕçтешĕсене тĕрлĕ ыйтупа пулăшу, канаш пама пултарать. Районти вĕрентӳ учрежденийĕсен хăрушсăрлăхĕ, вĕсен ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ çĕрĕсем, шкулсенчи профильлĕ вĕрентӳ, выпускниксемпе ĕçлесси – пĕтĕмпех унăн ĕç енĕ.*

*Кунсăр пуçне Алина Николаевна районти шкул ачисене çулла сывлăха çирĕплетмелли условисем туса парассишĕн те ответлă. Акă халĕ шăпах çак ыйтупа тимлет те вăл. «Кăçал çуллахи вăхăтра шкул ачисен 47 проценчĕ хула çумĕнчи лагерьсенче тата шкулсем çумĕнче йĕркеленекен лагерьсенче хăйсен сывлăхне çирĕплетме пултарĕ. «Роспотребнадзорăн» Чăваш Енри филиалне те, районти уйрăмне те проект заявкисемпе тухрăмăр ĕнтĕ», – ĕçе яланхи пекех вăхăтра пурнăçланине палăртрĕ специалист.*

**Н. НИКОЛАЕВА сăн ӳкерчĕкĕ.**

Прокуратурăра

## Çĕр ыйтăвĕпе

Районти прокуратура ĕçченĕсем кусман пурлăх правин патшалăх регистрацийĕ тата пурлăхпа çыхăннă ĕçсем çинчен калакан саккунсем мĕнле пурнăçланнине, çавăн пекех кадастр ĕçне, çĕрсен патшалăх мониторингне, геодезипе картографи ĕç-хĕлне тĕрĕслеççĕ. Çавна май Росреестрăн территори органĕсенчи, çавăн пекех патшалăх влаçĕпе вырăнти хăй тытăмлăх органĕсенчи кусман пурлăх прависен регистрацийĕпе, кусман пурлăха кадастр енĕпе шута илнипе, çĕрсен патшалăх тĕрĕслевĕпе çыхăннă коррупци сĕмĕллĕ тĕслĕхсем çинчен район прокуратурине 62-1-05 телефонпа пĕлтерме пулать.

**Э. СОКРАШКИН,**
**прокурорăн аслă пулăшаканĕ.**

Статистика тĕрĕслевĕ

## Пĕчĕк бизнес епле аталанать?

Пĕчĕк тата вăтам предпринимательство секторĕ мĕнле аталаннине палăртма Патшалăх статистикин федераллă служби 2011 çулта асăннă сектор субъекчĕсем тĕлĕшпе пĕр пĕтĕм статистика тĕрĕслевне ирттерет. Кун пек мероприятие пуçласа ирттереççĕ. Унăн пĕлтерĕшĕ çавăнта. Унччен пĕчĕк бизнес аталанăвне хакланă чухне шут кăтартăвĕсене кăна шута илнĕ пулсан малашне пахалăх кăтартăвĕсене шута илĕç. Çакă аталанăвăн малашлăх задачисене уçăмлатма, патшалăх пулăшăвĕпе тĕллевлĕрех усă курма май памалла.

Пирĕн Муркаш районĕпе 821 уйрăм предпринимателе, 135 пĕчĕк тата вăтам предприятие тĕрĕслемелле. Кăçалхи мартăн 1-мĕшĕ тĕлне вара статистика тĕрĕслевĕн формисене 782 предпринимателе, 120 пĕчĕк тата вăтам предприятие ярса панă. Ку вăл 95,25 тата 88,89 процент пулать. Кунта çакăн пек проблема тухса тăрать. Ытларах чухне хăш-пĕр представительсем ăçта вырнаçнине палăртма май çук. Çавна май вĕсен адресĕсене палăртассипе, пĕчĕк предприятисенчен пуринчен те отчетсене йышăнса пĕтерессипе ял тăрăхĕсен администрацийĕсемпе тачă çыхăнса ĕçлеме тивет.

Вĕсем çак ĕç пĕлтерĕшне тĕрĕс ăнланасса шанатпăр.

**Э. СИМАКОВА,**
**район администрацийĕн экономика пайĕн пуçлăхĕ.**

Пирĕн паллă ентеш

## Верăшăн сасăлар!

Вера Соколова пире пысăк çитĕнӳсемпе тăтăшах савăнтарать. Акă тин çеç пулса иртнĕ ăмăртура вăл мала тухса тĕнче рекордне çĕнетрĕ, 20 километрлă дистанцие 1 сехет те 25 минут та 8 çеккунтра парăнтарма пултарчĕ.

Çавна май унăн çитĕнĕвĕсене кура Верăна планетăри февральти чи ăнăçлă спортсменка ятне тивĕçме Европăри çăмăл атлетика ассоциацийĕн федерацине кĕртме палăртнă. Унсăр пуçне çак номинацие тата 10 çăмăл атлет ятне тăратнă. Хамăр ентешшĕн интернет урлă çак адреспа: **http:// www. european-athletics.org/ athlete- of-the-month** сасăлама пулать, сасăлав мартăн 18-мĕшĕччен пырать.

Верăшăн сасăлама манар мар.

Кĕскен

## Яла ĕçлеме чĕнеççĕ

Район администрацийĕн ял хуçалăх пайĕ хуçалăхсенче ĕç вырăнĕсем пурри çинчен пĕлтерет. Е. Андреев яч. хис. хуçалăха тĕп зоотехник (уйăхри ĕç укçи 7 пин тенкĕ), ĕне фермин пуçлăхĕ (5 пин тенкĕ), машинăпа ĕне сăвакансем (6 пин тенкĕ) тата водительсемпе механизаторсем кирлĕ. «Восток» хуçалăх тĕп инженерпа тĕп зоотехник (6,5 пин тенкĕ), ветеринари фельдшерĕ (5 пин тенкĕ) тата водительсене ĕçе чĕнет.

Паян районти ял хуçалăх предприятийĕсенче 28 ĕç вырăнĕ пушă.

## Пленум иртрĕ

Кăçалхи мартăн 2-мĕшĕнче ДОСААФ Муркаш районĕнчи вырăнти уйрăмĕн пленумĕ иртрĕ. Ăна общество уйрăмĕн председателĕ В.Г. Львов уçрĕ. Пленумра ДОСААФ членне илессин, член взносĕсене тӳлессин çĕнĕ йĕркисен, член билечĕсене парассин ыйтăвĕсене сӳтсе яврĕç. Ку ыйтусемпе ытларах общество членĕсем – шкулсенчи ОБЖ предметне вĕрентекенсем тухса калаçрĕç.

Каласа хăвармалла: республикипе çак вăхăта ДОСААФ членĕсем 600 çынна яхăн шутланаççĕ. Пирĕн районта вара вĕсем 100-е яхăн. Пленум мартăн 16-мĕшĕнче Турай шкулĕнче хăйĕн ĕçне малалла тăсмалла.

**Б. ШУРНОВ,**
**обществăн çар комиссариачĕн Муркаш тата Элĕк районĕсен пайĕнчи пуçламăш организацийĕн председателĕ.**

Райадминистраци пуçлăхĕн йышăнăвĕ

## «Пурăнмалли çурт-йĕр – 2011»

Çанталăк çуркунне еннелле сулăннă май ăшă кунсем пуçланиччен те нумаях вăхăт юлмасть. Ку вара каллех çуркуннехи типĕ курăкпа, шăрăх çанталăкпа çыхăннă. Ун пек лару-тăрура пушар хăрушлăхĕ ӳсни пирки ытлашши калама та кирлĕ мар. Çакна шута илсе район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю. Иванов пуш уйăхĕн 2-мĕшĕнче «Район территорийĕнче «Пурăнмалли çурт-йĕр – 2011» профилактикăпа надзор операцийĕ ирттересси çинчен» йышăну кăларчĕ. Вăл 2 тапхăрпа иртĕ: пуш уйăхĕн 1-мĕшĕ – çу уйăхĕн 31-мĕшĕ; авăн уйăхĕн 1-мĕшĕ – раштав уйăхĕн 25-мĕшĕ.

Çак операци вăхăтĕнче пушар хурал ĕçченĕсем, вырăнсенчи ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем ял çыннисемпе ăнлантару, вĕрентӳ ĕçĕсем, кивĕ электропроводкăсене улăштарассипе тата кăмакасемпе мăрьесене вăхăтра юсассипе калаçусем ирттерĕç.

Паянхи куна вара районта пушар хăрушсăрлăхĕпе çыхăннă лару-тăру çапларах. Пуш уйăхĕн 11-мĕшĕ тĕлне Муркаш енре пурĕ 12 пушар пулчĕ, ирĕке кайнă çулăм 2 çын пурнăçне татрĕ. Танлаштаруллă пăхсан пĕлтĕр çак тапхăрта пулнă 13 пушарта 1 çын пурнăçран вăхăтсăр уйрăлнăччĕ.

Пушартан кашниех тĕплĕ сыхлансан унăн инкекĕ те пысăк пулмĕ тата унран пăрăнса иртме те çул уçăлĕ.

Райадминистрацире

## Хисеп грамотипе наградăланă

Ял хуçалăх производствинче нумай çул хушши тăрăшса ĕçленĕшĕн район администрацийĕн пуçлăхĕн 2011 çулхи мартăн 1-мĕшĕнчи 156 № йышăнăвĕпе «Свобода» хуçалăхĕн çак ĕçченĕсене район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă:

– **Светлана Леонидовна ДИМИТРИЕВĂНА,** Çатракассинчи сĕт-çу фермин пăру пăхаканне;

– **Любовь Ивановна СМИРНОВĂНА**, Çатракассинчи сĕт-çу фермин машинăпа ĕне сăвакан операторне.

Нумай çул хушши тăрăшса ĕçленĕшĕн тата обществăлла ĕçсене активлă хутшăннăшăн район администрацийĕн пуçлăхĕн 2011 çулхи мартăн 2-мĕшĕнчи 157№ йышăнăвĕпе Чуманкасси ял тăрăхĕн пуçлăхне **Людмила Германовна КОВАЛЕВĂНА** район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă.

Çынсен сывлăхне сыхлас ĕçе тивĕçлĕ тӳпе хывнăшăн тата нумай çул хушши тăрăшса ĕçленĕшĕн район администрацийĕн пуçлăхĕн 2011 çулхи мартăн 4-мĕшĕнчи 165 № йышăнăвĕпе районти тĕп больницăн хирурги уйрăмĕн медицина сестрине **Ирина Аркадьевна СОФРОНОВĂНА** район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă.

Акци пырать

## Усал йăлана хирĕç

«Ăçта кам вилĕм сутать – пĕлтер» ятпа пĕтĕм Раççейри наркотиксене хирĕç акци пырать. Акцин пĕрремĕш тапхăрĕ пуш уйăхĕн 10-мĕшĕнче пуçăнчĕ, пуш уйăхĕн 18-мĕшĕччен пырать. Иккĕмĕш тапхăрĕ вара 2011 çулхи чӳк уйăхĕн 10 – 18-мĕшĕсенче пулать. Çавна май «шанăç телефонĕсем» ĕçлеççĕ, районти шалти ĕçсен пайне 62-8-79, управленине 23-01-00 номерсемпе кашниех кам тата ăçта наркотик сутни çинчен шăнкăравласа пĕлтерме пултарать.

**Районти шалти ĕçсен пайĕ.**

## Тав сăмахĕ – суйлавçăсене

Оринин ял тăрăхĕнче иртнĕ суйлавра маншăн сасăланă суйлавçăсене пĕтĕм кăмăлтан тав сăмахĕ калатăп. Ĕçĕрсем ăнса пыччăр, çемьере килĕшӳ хуçалантăр, сывлăхлă пулăр.

**Сире хисеплесе С.Г. ВОЛКОВ.**

Саламлатпăр



Пирĕн хаклă та юратнă çыннăмăра – Шарпаш ялĕнче пурăнакан **Лидия Алексеевна БОРИСОВĂНА** иртнĕ юбилей ячĕпе чун-чĕререн тухакан чи ăшă туйăмсемпе саламлатпăр. Эпир сана çирĕп сывлăх, иксĕлми телей, вăрăм кун-çул сунатпăр. Кил-йышра яланах килĕшӳ хуçалантăр. Мĕн ĕмĕтленни пĕтĕмпех пурнăçлантăр. Сĕтелӳ çăкăр-тăвартан ан таталтăр, кĕрекӳ тăвансемпе пуян пултăр. Ачусен, мăнукусен ырлăхне курса савăнмалла пултăр санăн. Килекен кашни кун ырлăхпа савăнăç илсе килтĕр.

**Пысăк салампа: мăшăрĕ, ывăлĕсем, хĕрĕпе кĕрӳшĕ, кинĕ, мăнукĕсем, тăхлачи, тăванĕсем.**



Хаклăран та хаклă аннене, кукамая, мамака, хунямана – Çĕньял Хуракассинче пурăнакан **Васса Васильевна ЛЬВОВĂНА** мартăн 15-мĕшĕнче 83 çул тултарнă ятпа ăшшăн саламлатпăр. Юман пек çирĕп сывлăх, чăваш сурпанĕ пек вăрăм кун-çул сунатпăр.

**Салампа: икĕ хĕрĕ, кĕрӳшĕ, мăнукĕсем, кĕçĕн мăнукĕсем.**

Ял тăрăхĕсенче профилактика кунĕсем пыраççĕ

# Йĕркене ял халăхĕпе пĕрле тумалла

***Турай ял тăрăхĕнче кĕçнерни кун профилактика кунĕ иртрĕ. Ытти çĕрти пекех унта хутшăнакансем ушкăнсене пайланса ĕçлерĕç. Çак кун пĕтĕмпе милици ĕçченĕсем право йĕркине административлă майпа пăснăшăн 9 протокол çырчĕç. Татса памалли ыйтусем вара кунта та çук мар. Профилактика кунне хутшăнакансем кĕрсе тухнă кашни çемьеренех пуçланать вăл.***

### «Ачана эрехпе улăштармастăп»

Эрех тени пурне те танлаштарать пулас. Килте ӳсĕрле «йĕрке» тума пуçланă чухне çакна ачасем те курса ӳснине шутламаççĕ çав. Ку тăрăхри пĕр çемьере те кин сыпкалама юратать. Çав сăлтава пула районти çул çитмен ачасемпе вĕсен прависене хӳтĕлекен комиссинче учетра тăрать. Ахаль те йĕркеллех мар хутшăну вара ывăл Мускава ĕçлеме тухса кайсан татах та хĕрсе çитет пулмалла: пукансене çавăрса çапни те, ытти те йăлтах ачасен куçĕ умĕнче пулса иртет. Профилактика кунĕнче хĕрарăм урăччĕ: ăна итлес пулсан унран «çветтуй» хĕрарăм çук. Малашне чăннипех те çапла пуласса шанас килет.

Хĕр çуралсан сахалтарах проблема пулать теççĕ хăшĕсем. Тĕрĕс воспитани парса ӳстермесен хĕрĕ те, ывăлĕ те пĕрех пуль çав. Ку тăрăхри ватă мăшăр та хĕрĕнчен телей курмарĕ. Куккук пурнăçне кăмăлларĕ хĕрĕ. Хăйĕн хĕрне тивĕçлĕ анне пулма вĕрентсе ӳстереймерĕ. Амăш ăшшине туйса ӳсмен хĕрĕн хăйĕн ачисем çав нушана ан курччăр тесе тăрăшмалла пек. Пурте апла мар иккен. Хĕрĕ те амăш çулнех суйларĕ: пĕр ачине Улатăрти пĕчĕк ачасен çуртне ăсатрĕ. Теприне вара çамрăк хĕрарăм хăйĕн кукамăшĕпе тата кукашшĕпе хăварса Шупашкара ярăнтарнă. Пĕр кун маларах кайнăскер профилактика кунĕнче те килте марччĕ. Мĕн сăлтавпа кайнине ватăсем пĕлмеççĕ.

– Кăна та ача çуртне памаллаччĕ, – чĕре шăнса каймалла сăмахсене каларĕ ватă хĕрарăм. Хытах тарăхаççĕ пулас пурнăç тума шутламан мăнукĕ çине.

Çатракассинчи çемьере вара 2 ача амăшĕ килте çукчĕ. Ял хушшинче тирпейлĕ те яп-яка тăхăнса çӳрекен хĕрарăм килте пĕр çӳппе те вырăнтан хускатманни палăрчĕ. Ку çуртра хĕрарăм пурăнать теме йывăр. Ку çеç-и? Килте пĕр пĕрчĕ кĕрпе, макарон та – çимелли нимĕн те çукчĕ. Ăçта çӳрет икĕ ача амăшĕ? Мĕн çитерет вăл ачисене шкултан килсен, кăна никам та калаймарĕ.

– Хура çăкăр çиетпĕр, – терĕ упăшкин сывлăх енчен хавшак шăллĕ.

Анчах пĕр çăкăр татăкĕ те ниçта та курăнмарĕ.

Ку çемьери лару-тăрăва Çулаври куккук-амăшĕ ачине упăшкипе пăрахса хăварса «вĕçсе кайнă» çемьепе танлаштарас килет. Арçыннăн килĕнче тип-тирпейлĕ, урайĕ те çап-çутă, çимелли те хатĕр.

– Ачана эрехпе улăштармастăп, – терĕ арçын.

Çак сăмахсене çак ялти час-час эрех сыпкалакан мăшăртан та (профилактика кунĕнче вĕсем урăччĕ), хăйсен тăван ачисене манса, «юлташсемпе» эрех ĕçекен хĕрарăмсемпе арçынсенчен те илтес килет.

– Çынна ĕç кирлĕ, – терĕ ял тăрăхĕ çумĕнчи çемьесемпе ĕçлекен комисси членĕ, Турай шкулĕнче ачасене вĕрентекен З.П. Григорьева. – Килти хушма хуçалăхрах укçа туса илме пулать. Эпир 2 ĕне усратпăр. Сĕт сутсах уйăхне 15 пин тенкĕрен кая мар тупăш тăватпăр.

Çак шухăша ăша хывсан тем пекехчĕ эрехе иленнĕ тата «хитре» пурнăç шыракан амăшĕсен, ашшĕсен. Профилактика кунне пĕтĕмлетнĕ май çӳлерех асăннă çимелли ним те çук çемьене кашни эрнерех кайса çӳреме калаçса татăлчĕç.

### Пĕтĕмлетӳ вырăнне

Пĕтĕм проблема эрех ĕçнинчен пуçланать çав. Профилактика кунне пĕтĕмлетнĕ чух районти шалти ĕçсен пайĕн ертӳçи Е.И. Плечов эрехпе иртĕхекенсемпе кĕрешессине вăйлатмаллине палăртрĕ. Çавăн пекех малтан судпа айăпланнисене те куçран вĕçертмелле мар. Мĕншĕн тесен преступленисенчен ытларахăшĕ эрех ĕçнипе пулать. Турайсенчен та пăрăнса иртмест çак проблема. Обществăлла хăрушсăрлăх милицийĕн ертӳçи В.А. Григорьев каланă тăрăх кăçалхи 2 уйăхра кăна милицин участокри уполномоченнăйĕ эрех ĕçсе обществăлла вырăнта çӳренĕшĕн, ӳсĕрле пĕчĕк хулиганла ĕçсем тунăшăн 36 протокол çырнă. Ку вăл çак тăрăхра пурăнакансен йышĕн 1,5 проценчĕ пулать. Тивĕçлĕ пĕтĕмлетӳсем тума хистет ку цифра. Аслисене кура кĕçĕннисем те эрех черккине алла илме пуçлаççĕ. Профилактика кунне пĕтĕмлетнĕ май районти шалти ĕçсен пайĕн çул çитмен çамрăксемпе ĕçлекен подразделенийĕнче учетра тăракан пĕр шкул ачине сӳтсе яврĕç. Çавăн пекех – эрехпе пуçа минретсе килте «çил-тăвăл» кăларнă 3 арçынна.

Февралĕн 15-мĕшĕнчен пуçласа мартăн 15-мĕшĕччен «Милици тата ачасем» акци иртрĕ. Çавна май районти шалти ĕçсен пайĕн çул çитмен çамрăксемпе ĕçлекен подразделенийĕн ертӳçи М.А. Конузина тата районти тĕп больницăн нарколог-психотерапевчĕ Л.М. Иванова Турай шкулĕнче ачасемпе тĕл пулса профилактика калаçăвне ирттерчĕç.

Çакна палăртса хăвармалла, профилактика кунне пĕтĕмлетнĕ çĕре хутшăнакансем, ял старостисем, депутатсем вырăнти татса памалли ыйтусенчен пăрăнманни пĕр ял тăрăхĕнче пĕрлех ĕçлемеллине ăнланни палăрчĕ. Анчах ял-йыш сахал пуçтарăннăччĕ. Çакăн пек мероприятисене кăна мар, профилактика ĕçне ял халăхне активлă явăçтармалла.

**Л. ПАВЛОВА.**

Суйлав

# Сасăлав итогĕсем паллă

Мартăн 13-мĕшĕнче районта вырăнти хăй тытăмлăх органĕсене суйлассипе иккĕмĕш суйлав иртрĕ. Суйлавçăсем Оринин ял тăрăхĕн пуçлăхне, депутатсен Уйкас Янасалти пĕр мандатлă 3-мĕш, Мăн Сĕнтĕрти 10-мĕш, Ильинкăри 2-мĕш, Катькассинчи 7-мĕш округсенчи ял тăрăхĕсенчи Пухăвĕсен депутачĕсене суйларĕç.

Суйлав итогĕсем çапла. Оринин ял тăрăхĕн пуçлăхне суйлама пĕтĕмпе 6 кандидат регистрациленĕ пулнă. Вĕсенчен А.Г. Блинов 58, А.С. Волков 449, С.Г. Волков 281, А.М. Воробьев 22, А.П. Прокопьев 3, А.С. Суриков 425 сасă пухнă. Çапла вара суйлавçăсен ытларах сассине пухса Оринин ял тăрăхĕн пуçлăхĕ пулма **Александр Сергеевич Волков** суйланнă.

Уйкас Янасал ял тăрăхĕ тăрăх пĕр мандатлă 3-мĕш Кĕртекасси суйлав округĕпе депутатсен ял тăрăхĕнчи Пухăвĕн депутачĕ пулма **Виктор Иванович Егорова,** Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕнчи 10-мĕш Мăн Тутаркасси суйлав округĕпе **Владимир Трифонович Яшмолкина**, Ильинка ял тăрăхĕнчи 2-мĕш Куçкин суйлав округĕпе **Михаил Ананьевич Бычкова**, Катькас ял тăрăхĕнчи 7-мĕш Молодежная суйлав округĕпе **Алевтина Сидоровна Евдокимовăна** суйланă.

**Хамăр инф.**

Пирĕн пата çыраççĕ

# Тăхăр вуннăра та – пурнăçпа тан

Кăçалхи нарăс уйăхĕн 25-мĕшĕнче Шурча шкулĕнче нумай çул вырăс чĕлхипе литературине вĕрентнĕ, кайрантарах ĕç урокĕсене ертсе пынă Федор Васильевич Савельев 90 çул тултарчĕ.

Ф.В.Савельев учителе вара Шурча таврашĕнче пĕлмен тата палламан çын çук та пулĕ. Вăл 57 çул хушши Шурчари шкулта вăй хунă. Унăн пултарулăхĕ, çитĕнĕвĕсем пирки каласа та пĕтерес çук. Хăй ĕç ĕмĕрне сумлă вĕрентекен йăлтах çынсене, ачасене пилленĕ. Алли унăн «ылтăнран» пулĕ, кирек епле ĕçе те вĕçне çитерет.

Шкулта 1990 – 2001 çулсенче ĕç урокĕсене ертсе пынă май вăл ачасен вăйĕпе шкулăн кивĕ çуртне тĕпрен çĕнетнĕ. Ачасем валли столовăй йĕркеленĕ. Вăл ертсе пынипе ачасем тĕрлĕрен япаласем туса ял халăхне сутнă. Унсăр пуçне Федор Васильевич пуçарнипе шкулта тĕрлĕ ĕç пӳлĕмĕсем йĕркеленĕ. Унăн тăрăшулăхĕпех шкул пахчи çĕкленĕ, унта халĕ 200 яхăн çырла тĕмми ӳсет. Ял халăхне те тĕрлĕ çырла хунавĕ сутнă, шкул столовăйĕ валли апат-çимĕç туянма пулăшнă.

– Ĕçлемесĕр ларма пултараймастăп, – тет вăл тăтăшах тĕрлĕ ĕçпе аппаланма хăнăхнăскер. Хисеплĕ вĕрентекен ӳсекен ăрăва ĕçчен те сăпайлă, малашлăхра тĕрĕс çул-йĕрпе утма вĕрентет.

Федор Васильевич хăй ачисене тĕрĕс воспитани парса ӳстернĕ. Вĕсем вара ăна ырă тĕслĕх вырăнне хунă, çĕр-шывшăн усăллă çынсем пулнă. Хĕрĕ Люба Хусанти химипе технологи институтĕнчен вĕренсе тухнă. Халĕ тивĕçлĕ канура пулин те тĕп технолог тивĕçне пурнăçлать. Ывăлĕ Владимир Шупашкарти Чăваш Патшалăх университетĕнче вĕреннĕ, инженер профессине алла илнĕ. Вĕсен ĕçри тăрăшулăхне Хисеп грамотисем çирĕплетеççĕ. Ватта сума сăвакан – хăй те сумлă пулакан, теççĕ халăхра. Çакна вара Савельевсем пиркиех каланă. Ачисем Федор Васильевич патне килсех тăраççĕ, килçурт таврашĕнче ĕçлесе пулăшаççĕ.

Хисеплĕ Федор Васильевич! Сире сума суса 90 çулхи юбилейпа чун-чĕререн саламлатпăр. Пурнăçăн тумхахлă та анлă çулĕпе, йывăрлăхсене çĕнтерсе шанчăклă утса пыма чăваш юманĕ пек çирĕп сывлăх, тăнăçлăх, чăваш тĕрриллĕ сурпан пек вăрăм, пархатарлă кун-çул, çăл куç пек тапса тăракан вăй-хал, иксĕлми телей сунатпăр. Ĕмĕт-тĕллевӳсем яланах пурнăçланса пыччăр.

Шурча шкулĕнче сирĕн пек пултаруллă учитель ĕçленишĕн мухтанатпăр, пирĕншĕн ырă тĕслĕх пулнишĕн савăнатпăр.

**Шурча шкул коллективĕ.**

Сăмах – хаçат тусĕ çинчен

# «Сăвă-юрă пурăнма пулăшать»



***Кашмашра пурăнакан И.В. Майков пушă вăхăтра юрлама-ташлама, сăвă-хайлавсем калăплама юратать. Муркашри Культура çурчĕ çумĕнчи «Муркаш» халăх фольклор ансамбльне çӳрет. Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен кунне халалланă уяв каçĕнче Муркашра вăл çак ушкăнта юрланипе пĕрлех хăй çырнă юрра та хăех шăрантарчĕ. Илемлĕх тĕнчине вара Игорь Викторович ача чухнех кăмăллатчĕ. Хăй каланă тăрăх 3 класра пĕрремĕш хут ялти клуб сцени çине тухни уншăн тем пысăкăш савăнăç пулнипе пĕрлех пысăк çĕнтерӳ те пулнă.***

Ачашăн хăйĕн пултарулăхне курни, хăйĕн вăйне шанни пысăк пĕлтерĕшлĕ-çке. Хăйне çак илемлĕх авăрне илсе кĕнĕ В.Г. Тепловпа А.Е. Романова паян та тав тăвать вăл. Шупашкарти профтехучилищĕре вĕреннĕ чухне вара унăн директорĕ, вăлах музыкант та В.С. Романов хавхалантарса пыратчĕ. Кайран Совет Çарĕнче тăнă çулсем. Унта та уçă саслисен шутĕнчеччĕ Игорь Майков. Юрлама юратаканскерне сăвă çырса пăхас шухăш та пырса кĕрет. «Тен пулать», – шухăшлать вăл.

1991 çултанпах район хаçачĕпе çыхăну тытма пуçланăскер редакцине заметкăсем çырма хăнăхнăччĕ ĕнтĕ. Ялти маттур çынсемпе, пулса иртекен событисемпе паллаштарнипе пĕрлех вăл е ку çивĕч ыйтусене те хускатма пуçларĕ пыра-киле. Хăйĕн пĕрремĕш сăввине те хаçата илсе каять вăл.

– Сан пулмасть темерĕç мана унта. Ман сăвва юсаса-майлаштарса пичетлерĕç. Ун чухне çырусен пайĕн ертӳçинче Л.П. Туктина ĕçлетчĕ. Мана сăвă çырассин вăрттăнлăхĕсене уçса пачĕ, – аса илет паян И.В. Майков.

Халĕ вара Игорь Викторович çырнă сăвăсемпе композиторсем юрăсем те кĕвĕлеççĕ ĕнтĕ. Юрий Жуков («Лартрăм чечексем эп çуркунне»), Меркурий Ягунов («Парнелетĕп савнине»), Виталий Романов («Юл савăнса вăхăтра») пĕрре кăна мар илемлĕ кĕвĕпе унăн сăввисене «чун кĕртнĕ». Юрăçăсем те унăн сăввипе çырнă юрăсене хаваспах кĕртеççĕ хăйсен репертуарне: Ирина Пономарева, Маргарита Туринге, Лариса Васильева, Фаина Григорьева, Вера Никонорова, Елена Леонтьева, Николай Столяров шăрантаракан юрăсене хаçат вулакансем те пĕрре кăна мар илтнĕ пулĕ. Маларахри çулсенче «Ăраскал» радиопередачăра та пĕрре кăна мар паллаштарнă И. Майков хăйĕн сăввисемпе. «Свобода» хуçалăхри стройбригадăра вăй хураканскершĕн сăвăсем çырни кăмăлне çĕклет унăнне. «Юрра-ташша килĕштерни, сăвăсем хайлани мана пурăнма, хуйха-суйха парăнтарма пулăшать», – тет И.В. Майков кун пирки. Ыттисене те çав илемлĕх тĕнчипе туслашма сĕнет. Мĕнех, ăна ăнăçусем сунмалли çеç юлать.

**Л. ПЕТРОВА.**

Вулакан пултарулăхĕ

# Ыраттартăн чуна

Ыраттартăн, чуна, ыраттартăн,
Ма мана шеллемерĕн пачах?
Улталарăн, чунна вараларăн,
Ачасем хута кĕчĕç анчах.

Куçăмран сахал мар куççуль юхрĕ,
Хускатмарĕ пăрланнă чунна.
Аллусем урăхне ачашларĕç,
Ах, мĕнле, ман мĕнле пурăнас?

Кантăкран, кантăкран шав пăхатăп.
Сан машин халь ăçта-ши тăрать?
Телефон çумĕнчен уйрăлмастăп,
Эс ăçта-ши? Ман чун ыратать.

Айăпне пĕр манра çеç шыратăн,
Йышăнап, ачасем пур çав ман.
Шкул ĕçне эс хăвах ăнланатăн,
Хăть пĕртак хĕрхенесшĕн те мар.

Çемьене салатас та килмест сан,
Пирĕнтен уйрăласшăн та мар.
Ултав пурнăç вĕç-хĕрсĕр пулмасть çав,
Манăн чăтăм та ĕмĕрлĕх мар.

**Мучарпи.**

Ыйту – хурав

# Соцпакет пиркиех

**– 2010 çулхи ноябрь уйăхĕнче эпĕ инвалид пулса тăтăм, манăн кӳршĕ вара – 2011 çулхи январьте. Соцпакета эпир çăмăллăхсемпе илсе тăратпăр. Соцпакетпа усă курма пăрахасси пирки пирĕн 2011 çулхи апрелĕн 1-мĕшĕччен заявлени çырмалла пулать-и?**

– Заявлени çырма пултаратăр. Анчах та вăл 2012 çултан тытăнса кăна вăя кĕрет. Мĕншĕн тесен куçăм тапхăрĕ пур. Вăл уйăхсерен укçан тӳлессине 2010 çулхи октябрĕн 1-мĕшĕччен палăртнисене кăна пырса тивет. Енчен те вара соцпакетпа усă курмалли ирĕке çав дата иртсен панă пулсан унчченхи йĕрке вăйра пулать – соцпакет енĕпе заявление 2012 çул валли 2011 çулхи октябрĕн 1-мĕшĕнчен кая юлмасăр памалла.

**– Манăн асанне – вăрçăра вилнĕ салтакăн тăлăх арăмĕ. Соцпакетпа пачах усă курмасть вăл. Анчах та нумаях пулмасть унăн сывлăхĕ самай хавшаса кайрĕ, тӳлевсĕр эмелсем кирлĕ пулчĕç. 2010 çулта асанне соцпакетăн медицина пайĕпе çăмăллăхсемпе усă курасси пирки заявлени çырса пачĕ. Анчах та ватлăх çулĕсене кура вăл санаторие нихăçан та кайма килĕшес çук. Асанне санатори вырăнне укçан илме пултарать-ши?**

– Пултарать. Çавна валли унăн 2011 çулхи апрелĕн 1-мĕшĕччен Пенси фончĕн вырăнти управленине пымалла, соцпакетăн санаторипе курорт пайĕпе усă курас марри пирки заявлени çырса памалла. Заявлени панă хыççăн тепĕр уйăхран тытăнсах вăл уйăхсерен санатори вырăнне 84 тенкĕ илме тытăнĕ.

Сăмах май ватлăх çулĕсене пула хăйсем пырса çӳреймен тата пĕччен пурăнакан ватăсем патне Пенси фончĕн специалисчĕсем хăйсем те пыма пултараççĕ. Çавна валли Пенси фончĕн управленине тӳрĕ лини телефонĕпе шăнкăравламалла кăна.

**– Эпĕ 2010 çулхи октябрĕн 1-мĕшĕченех соцпакетпа усă курма пăрахрăм. Апрелĕн 1-мĕшĕччен манран заявлени йышăнĕç-и?**

– Апрелĕн 1-мĕшĕччен соцпакетăн эмел тата санаторипе курорт пайĕсемпе усă курма пăрахасси пирки кăна заявлени çырма пулать. Саккун транспорт пайне пырса тивмест. Соцпакетăн транспорт пайĕпе усă курас марри пирки заявление 2011 çулхи октябрĕн 1-мĕшĕччен пама пулать, вăл 2012 çултан тытăнса вăя кĕрет.

**Пенси фончĕн районти управленийĕ.**

Мартăн 15-мĕшĕ – тавар туянакансен прависене хӳтĕлемелли кун

# Тавар туянакана хӳтĕлемелле

Чи малтанхи хут çак пĕлтерĕш пирки Джон Кеннеди 1961 çулта США-ра иртнĕ конгресра асăннă, çав çулах пĕтĕм тĕнчери тавар туянакансен пĕрлешĕвĕн организацине регистрациленĕ. Вăл 72 çĕр-шыври обществăлла тата патшалăх 180 организацийĕнчен тăрать, тавар туянакана тĕрлĕ енлĕ хӳтĕлет. 1989 çулта тавар туянакансен прависене хӳтĕлекенсен пĕрлешĕвĕн федерацине йĕркеленĕ. Федерацие антимонополи комитечĕ, санэпиднадзор, патшалăх стандарчĕ тата ыттисем те кĕнĕ. 1992 çулта Раççей пĕтĕм тĕнчери тавар туянакансен прависене хӳтĕлемелли куна паллă тума пуçланă, «О защите прав потребителей» саккуна йышăннă. Тивĕçлĕ саккун пулăшăвĕ тавар туянакана суту-илӳре питĕ кирлĕ. Çапла вара тавар туянакана халĕ сакăр тĕрлĕ права хӳтĕлет. Кăçал çак кун «Потребитель за честные финансовые услуги» девизпа иртет.

Муркаш районĕ те тавар туянакансен прависене хӳтĕлемелли куна халалласа тĕрлĕ мероприяти ирттерчĕ. Çавна май суту-илӳ тĕлĕшĕнчи тĕрлĕ ыйтусемпе шăнкăравласа пĕлтерме «шанăç телефонĕ» йĕркеленĕ, унăн номерĕ 62-3-89. Мартăн 6-мĕшĕнче Мăн Сĕнтĕр тата Муркаш ял тăрăхĕсенче уяв иртрĕ. Унта «Икерчĕ хăналăвĕ» конкурс пулчĕ. Тутлă апат-çимĕç ăстисем 18 тĕрлĕ икерчĕ пĕçерсе сăйларĕç. Çапах та Шомикри кафе ĕçченĕсене çитекенни пулмарĕ, вĕсен икерчисем хăйне майлă селĕм пулчĕç. Ăстаçăсем асăнмалăх парнепе диплома тивĕçрĕç.

**Э. СИМАКОВА,**
**экономика пайĕн ертӳçи.**

# Сĕтел çине – паха апат-çимĕç

**Сентресем çинчи тавар хакĕ, пахалăхĕ çынсене тăтăшах калаçтарать, хумхантарать. Туянаканшăн тавар пахалăхĕ малта пулмалла вĕт. Акă çак кунсенче хаçат редакцине пĕр çыру килчĕ:**

***«Лавккара кăлпасси туянтăм. Анчах та ун этикетки çине ăна хăçан хатĕрлесе кăларнине çырман, сутнă кунне кăна палăртнă. Тĕрĕссипе вара кăлпассие маларахах пĕçернĕ вĕт. Этикетка çине пăхсан тавара сутнă кун ăна хатĕрленипе пĕр вăхăта килет».***

**А. ИВАНОВА.**

**Ку çыру тата тавар пахалăхĕ пирки калаçма эпĕ «Роспотребнадзор» управленийĕн территори уйрăмĕн тĕп эксперт специалисчĕпе Глафира Григорьевна ВОРОБЬЕВĂПА çыхăнтăм.**

– Тавар пахалăхĕ, хакĕ куллен тимлĕх уйăрмалли çивĕч ыйтусенчен пĕри пулса тăрать. Эпир сутуçăсем халăха сĕнекен тавар пахалăхне тĕрĕслесех тăратпăр. Пĕтĕмĕшле илсен вара республика шайĕнче иртнĕ çул пахалăха тĕрĕсленĕ апат-çимĕç продукчĕсен 10 процентĕ нормăпа килĕшсе тăман. Хăш чухне пахалăхсăр тавара сутлăхран пачах та пăрахăçлама, яваплисене ответ тыттарма тивет. Республикăн патшалăх ветеринари службин ертӳçи Г.Яковлев палăртнă кăтартусене илсе кăтартăм-ха. Предприятисемпе пасарсенчен 75 тонна ытла аш-пăш, 2 тоннăна яхăн пулă, 0,8 тонна сĕт продукчĕсен пахалăхсăр изделийĕсене пăрахăçлама тивнĕ.

Иртнĕ çул районта апат-çимĕç чĕр таварĕсемпе продукчĕсем тĕлĕшпе 620 тĕрĕслев (проба илнĕ) ирттернĕ. 16 тĕслĕхре çитменлĕхсем тупса палăртнă, продуктсен пахалăхĕ нормăпа килĕшсе тăман. Вăл шутра 9 çитменлĕх обществăлла апатлану предприятийĕсенче, 7-шĕ Муркаш сĕт заводĕнче палăрнă.

Ку çыру авторне вара çапларах калас килет. Кăлпассие лавккана курупкасемпе кӳрсе килеççĕ. Вĕсем çинче кăлпассие хăçан пĕçерсе хатĕрленине çыраççĕ. Сентресем çине касса хунă тавар этикетки çинче саккунпа килĕшӳллĕн вара ăна хăш-пĕр тавар çинче палăртмасан та пултараççĕ. Ун пирки эсир сутуçăран ыйтма пултаратăр, вăл сире ăнлантарма тивĕç. Хăш чухне вара сутмалли срокĕ тухнă кăлпассие касса пысăках мар висçепе сутма пултараççĕ. Сĕнӳ – сутуçа çимĕçе хăвăрăн умра виççе, чĕркесе пама ыйтмалла. Этикетка çинче тавар ячĕ, сорчĕ, таварăн пĕр килограмĕ тата касса хунин хакĕсем, ăна хăçан касса чĕркени, тавара хăçанччен усă курма юрани, сутуçă алă пусни кирлĕ. Нормăпа килĕшӳллĕн пысăк лавккасенче, пасарта тĕрĕслев тараси пулмалла.

Этикеткăсене, тавар тытăмĕ, сутмалли срокĕ çинчен пĕлтернине тимлĕн вуламалла. Сутуçăран сертификат тата гаранти документчĕсем ыйтма вăтанмалла мар.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

Патриотла воспитани

# «Халĕ тăрăшни малашне пулăшĕ»




***Çапла хурав пачĕ Сергей Куликов курсант Муркаш шкулĕнчен кăçал вĕренсе тухакансем унăн вĕренĕвĕпе, курсант пурнăçĕпе интересленсе панă ыйтусене ответленĕ май. Иртнĕ эрнере вăл хăй вĕреннĕ Муркашри вăтам шкула учительсемпе тата юлташĕсемпе тĕл пулас тесе ятарласах çитрĕ.***

«Отпуск вĕçлениччен тăван шкула килсе курас килчĕ. Халĕ 11 класра вĕренекенсем хушшинче çар училищине вĕренме каяс текенсем пуррине пĕлсен вара вĕсене хам вĕреннĕ институтпа паллаштарас тесе шутларăм», – пĕлтерчĕ вăл.

Чăнах та тĕл пулу вăхăтĕнче 11-мĕшсем Пермьри РФ наказанисене пунăçа кĕртессин федераллă служба институтне мĕнле вĕренме кĕмеллине те, унта мĕнле дисциплина пулнине те тĕппипех пĕлчĕç темелле. Сăмах стипенди çине куçрĕ. «5 пин тенкĕне яхăн стипенди, тӳлевсĕр апатлану, тӳлевсĕр çи-пуç, хăвна ыра енчен кăтартсан – хавхалантару укçи. Çакă маншăн, 1 курсра вĕренекеншĕн, лайăх тесе шутлатăп. Вĕренӳре ĕлкĕрсе пымалла кăна. Паллах, дисциплина çирĕп пулни, ответлăха туйни кирлĕ. Çар çыннин, чăн-чăн арçыннăн чи кирлĕ енĕсем çаксем. Стипенди илсе тăни вара атте-аннешĕн те çăмăллăх тесе шутлатăп», – пулчĕ хурав.

Çăмăллăх кăна та мар. Çар институтĕнче вĕренекен ывăлĕшĕн мăнаçланма та май пур Сергейăн ашшĕпе амăшĕн. Акă Пермьри институт ку таранччен Раççейри çар профилĕпе пĕлӳ паракан аслă шкулсем хушшинче ирттернĕ йĕлтĕрçĕсен ăмăртăвне пĕрремĕш хут хутшăнма пултарнă. Ку вара пирĕн Муркаш каччипе тӳрремĕнех çыхăннă. Хăйĕн курсĕнчи юлташĕпе аслăрах курсри тепĕр икĕ яшпа пуçарулăх кăтартса вĕсем тренировкăсем ирттерме тытăннă. Институт администрацийĕ курсантсене пулăшнă. Ĕç кăтартăвĕ – Пермьри институтăн команди 34 команда хутшăннă ăмăртура пиллĕкмĕш вырăн çĕнсе илнĕ.

Вĕренӳре йывăр та, ĕçре çăмăл тесе ахаль каламан. Сергей каланă тăрăх вĕренӳри йывăрлăхсене пурте чăтса ирттереймеççĕ – институтри вĕренĕве пăрахакансем те пур. Анчах та Куликов курсантăн шухăшĕ çирĕп: «Пурнăçа хĕç-пăшаллă вăйсемпе çыхăнтарсан та, «гражданкăра» та хăвăн вырăнна тупмалла, чăн-чăн арçын пулмалла».

**Н. НИКОЛАЕВА.**

**Сăн ӳкерчĕкре: кăçал шкултан вĕренсе тухакансен Сергей Куликов курсантран ыйтса пĕлмелли нумай.**

Хуçалăхсенчи отчетпа суйлав пухăвĕсенчен

# Ӳсĕмсен çулĕнчех Исетерккĕсем

***Черетлĕ ял хуçалăх çулĕн икĕ уйăхĕ иртрĕ. Çĕр ĕçченĕ унчченхи çулталăка пĕтĕмлетет, мĕн тунине тишкерсе малашлăх планĕсене уçăмлатать. Паян районти пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенче отчетпа суйлав пухăвĕсен тапхăрĕ пырать. Рынок хутшăнăвĕсенчи экономика улшăнăвĕ çакна çирĕп ответлăхпа тума ыйтать.***

Иртнĕ эрне кун çак ответлă ĕçе Чкалов яч. хис. хуçалăх ĕçченĕсем туса ирттерчĕç. Мĕнле ĕçлерĕç-ха пĕлтĕр Исетерккĕсем? Çак ыйту çине пухăва ячĕшĕн тухман хуçалăх ертӳçи те, тĕп специалистсем те пĕлтĕрхи ĕçсене тишкерсе тĕплĕ хурав пачĕç, мĕн тата мĕнле ĕçленине кура умри плансене палăртрĕç, тĕллевсене ăнăçлăрах пурнăçлама майсем пуррине сӳтсе яврĕç.

Пĕлтĕрхи çанталăк условийĕсем шăрăха пула уйрăмах пысăк йывăрлăхсем кăларса тăратрĕç пулин те паянхи ĕçе ыррана хăварманнисене лачакана путармарĕ. Çанталăк условийĕсене пăхмасăрах аталану çулĕпе утакансем хушшинче Чкалов яч. хис. хуçалăх та пур.

Ĕç кунĕсенче Исетерккĕсем кашни сехетпе тулăх усă курас тĕллевпе çăмăл мар çанталăк условийĕсенче те пĕлтĕр тулли вăй-хăватпа тата агротехнологие пăхăнса çур аки ирттерчĕç, акнă-лартнă культурăсене çум айне пулма памасăр сăтăрçăсенчен асăрхаса пăхса ӳстерчĕç, паха утă пуçтарчĕç, выльăх апатне вăхăтра та çителĕклĕ хатĕрлерĕç. Çакăн пек тăрăшулăхпах пысăк лаптăксем çинче вырма ирттерчĕç, хирсене кĕрхи культурăсем акса хăварчĕç. Хăйсем пурнăçламасан умри ĕççене никам та туса парас çуккине Исетерккĕсемпе Анаткас Апашсем аван ăнланаççĕ. Вĕсем пĕлтĕр 700 гектар ытла лаптăк çинче ӳстернĕ тĕш тырăпа пăрçа йышши культурăсене тирпейлĕ пухса илсе кĕлете кĕртсе хучĕç. Куç шăрçине сыхланă пек пăхса ӳстернĕ пурлăх шăрăх çанталăк кăларса тăратнă йывăрлăхсенче те производствăна питех чакарса яма памарĕ.

Пĕрлехи тăрăшулăхпа хуçалăх ĕçченĕсем вицĕм çулхи сенаж масси çумне пĕлтĕр 325 тонна хушрĕç, обществăлла выльăх-чĕрлĕх валли 132 тонна утă янтăланипе пĕрлех ăна хуçалăхра ĕçлекенсемпе ял çыннисемшĕн 130 тонна вăхăтра пуçтарса типĕтрĕç. Унчченхи çулсенче те малашлăха пăхса ĕçленĕ хуçалăх шăрăх çанталăк кăларса тăратнă йывăрлăхсене çĕнме маларахри вăхăтра хатĕрленĕ тата пĕлтĕрхи вырмари улăма, утăна, сенажа 2 миллион ытла тенкĕлĕх районти хуçалăхсемпе çынсене сутрĕ. Пĕрлехи тимлĕхе кура хуçалăх хĕл каçма условнăй выльăх пуçне 28 центнер выльăх апачĕ хатĕрлеме пултарчĕ. Апат пуррине кура кăçалхи кăрлач уйăхĕн 1-мĕшĕ тĕлне Исетерккĕсем мăйракаллă шултра выльăхсен йышне вицĕм çулхинчен 62 пуç хушса (районта иккĕмĕш кăтарту) 208 пуçа çитерчĕç. Вăл шутра ĕнесем 66 пуç (2009 çулхинчен 5 пуç ытларах). Çакă пулса тăрать те хĕл кунĕсенчи тухăçпа экономика тĕрекĕн никĕсĕ.

– Юптарури пек çуллахи илемлĕ кунсене юрласа та выляса ирттерсен хĕл кунĕсенче савăнăç валли вырăн юлманнине ăнланатпăр тата ялан производствăпа экономика планĕпе килĕшӳллĕн ĕçлеме тăрăшатпăр, – палăртрĕ хăйĕн отчетлă сăмахĕнче кооператив ертӳçи Павел Геннадьевич Ефимов. Çакă вăл нумай цифрăсемлĕ тулли докладăн шăнăрĕ пулчĕ.

Çĕнĕ технологисене ĕçе кĕртсе Чкалов яч. хис. хуçалăх уй-хир тата выльăх-чĕрлĕх продукцийĕ туса илсе унпа сутă туса вицĕм çулхинчен 2,5 миллион тенкĕ ытларах (10 миллион тенкĕне яхăн) укçа тума мехел çитерчĕ. Кунта таса тупăш пирки каласа хăварни те вырăнлă пулмалла. Вăл пĕлтĕр Исетерккĕсемпе Анаткас Апашсен 900 пин тенкĕне яхăн пулнă. Хуçалăхра вăй хуракансен вăтам ĕç укçи те районта пысăккисен шайĕнче: 6722 тенкĕ.

– Мĕн пурнăçлани тухăçлă ĕçлеме пирĕн майсем татах пуррине çирĕплетет. Куллен укçа паракан фермăсенче пĕлтĕр юсав ĕçĕсем нумай ирттернипе пĕрлех кăçал сĕт пăрăхне те çĕннине хута ярсан продукци пахалăхĕ те, тупăш виçи те ӳсессе шанатпăр. Çакна валли ĕçлекенсен кăмăлĕ те пысăккине курса тăратăп, – терĕ Павел Геннадьевич отчетпа суйлав пухăвĕнче хăйнех малалла ĕçлеме, çĕнĕлĕхсене пурнăçа кĕртме пуху пĕр саслă шаннишĕн тав тунă май. Умри тĕллевсене лайăх курса тăни вара кунта паянхи пулăм мар.

Хуçалăхра пĕлтĕр кашни ĕне пуçне 4 пин ытла килограмм сĕт сунă. Малта пыракан хуçалăхсем çав хушăрах 6 пинлĕ чикĕ урлă иртни Исетерккĕсене малалла чĕнекен йыхрав пулнине йышăнса председатель ăна хуçалăхăн тĕп тĕллевĕ тесе палăртрĕ. П. Ефимов сăмахĕнчен çĕнĕ сĕт пăрăхĕ хуçалăхри ĕççене ресурс перекетлемелли технологи çине куçармалли тĕллевĕн пуçламăш утăмĕсем пулни те яр уççăн курăнчĕ.

Пухăва район администрацийĕн пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕ, ял хуçалăх пайĕн ертӳçи В. Калинин хутшăнчĕ. Хăйĕн сăмахĕнче Владимир Аркадьевич Чкалов яч. хис. кооператив районта ырă малашлăхпа ĕçленин тĕслĕхĕ пулнине тĕрлĕ кăтартусемпе çирĕплетрĕ.

Пĕтĕм ĕçе критикăлла пăхса тухса хуçалăх ĕçченĕсем иртнĕ çулхи ĕççене «вăтам» хак пачĕç. Уставпа килĕшӳллĕн пĕрлехи пухура хуçалăх ертӳçипе пĕрлех правлени тата сăнав канашĕсене суйласа хăварчĕç.

**А. БЕЛОВ.**

Редакци почтинчен

# «Концерт парнерен те парне пулчĕ»

Çуркуннен пĕрремĕш уявĕ хĕрарăмсен пулни тĕрĕсех. Çут çанталăк чĕрĕлме пуçланипе хĕрарăмсем татах та илемленеççĕ, пурнăça татах та хитрелĕх парнелеççĕ. Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен кунне халалласа Москакассинчи Культура çуртĕнче «Шуçăм» юрăпа ташă халăх ансамблĕ пуян та пысăк программăллă концерт лартса пачĕ. Культура çуртĕнче ал ĕçĕсен выставки те ĕçлерĕ.

Концерт пуçланиччен ял тăрăхĕн пуçлăхĕ А.Н. Матросов сăмах илсе залра ларакан пур хĕрарăма та арçынсен ячĕпе чунчĕререн саламларĕ. «Передовик» хуçалăхăн ертӳçи Н.Л. Царев та салам сăмахĕ каласа хаваслантарчĕ.

Концерт вара икĕ сехете яхăн тăсăлчĕ, куракансемшĕн пысăк парне пулчĕ. Мĕнле кăна ташă курса, мĕнле кăна юрă итлесе савăнмарăмăр пуль.

Республикăра нумай пулмасть иртнĕ «Мехел» конкурсра иккĕмĕш вырăн йышăннă Даша Макарова хăйĕн илемлĕ сассипе тĕлĕнтермеллипех тĕлĕнтерчĕ. «Калинка» ташă ушкăнĕ тата! Ахальтен мар ĕнтĕ вĕсем кăçал Чулхулара иртнĕ Раççей конкурсĕнчен 3-мĕш вырăн çĕнсе илсе таврăнчĕç.

Арçынсен ушкăнĕ вара Культура çуртне пухăннă хĕрарăмсене юрă парнелесе вĕсен чĕрисене тыткăнларĕ.

Çак уяв каçĕнче хавасланмалли тата тепĕр самант пулчĕ. Н.М. Кондукторова хут купăсçă Чăваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ ят илнине пĕлсен ăна пурте саламларĕç.

Концерт вĕçленсен те çынсем киле часах саланмарĕç. Хăйсен шухăш-кăмăлне сцена çине хăпарса каласа пачĕç. Вĕсемшĕн çак концерт парнерен те парне пулнине пĕлтерчĕç.

**Г. ГОЛУБЕВА.**

# Ӑмӑрту хаваслӑ уяв пекех иртрĕ

***Район администрацийĕн пуçлӑхĕн кубокне çĕнсе илессишĕн иртнĕ ӑмӑрту йĕлтĕр спортне юратакансемшĕн чӑн-чӑн уяв пулчĕ. Ӑмӑртакан командӑсем, вĕсене курма пухӑннисем Çурлатринчи Культура çуртĕ çумĕнче йĕркеленнĕ «Çеçпĕл» эстрада ансамблĕн илемлĕ юррисене итлесе киленме пултарчĕç. Муркашри ачасемпе çамрӑксен искусство шкулĕнчи О.В. Григорьева хореограф ертсе пыракан ташӑ ушкӑнĕ те хӑйĕн пултарулӑхĕпе савӑнтарчĕ. Çурхи хĕвеллĕ çанталӑк вара ирех кӑмӑла хӑпартрĕ. Район администрацийĕн пуçлӑхĕ Юрий Александрович Иванов ĕç çынни йĕлтĕр йĕрĕ çине ӑмӑртма тухнине ырласа спортӑн çак енĕ районта анлӑ аталанакан спорт енĕсенчен пĕри пулнине те каларĕ. Çак ӑмӑрту хастар, çĕкленӳллĕ кӑмӑл пухса малалла та вӑй парса тухӑçлӑ ĕçлеме хистенине палӑртса пурне те ӑнӑçусем сунчĕ.***

## Районти ырӑ йӑла



Ӑмӑртакансене саламлаканĕсем хушшинче ЧР Патшалӑх Канашĕн депутачĕ В.Г. Данилов, ӑмӑртӑва пуçарса яракан В.И. Вязов та пулчĕç.

Малтанах старта ертӳçĕсен çумĕсем тухса тĕслĕх кӑтартрĕç. Пĕрисем пур вӑя пухса мала тухассишĕн ӑмӑртнине, теприсем вара йĕлтĕр йĕрĕ çине хӑйсен кӑмӑлне çĕклесе хаваслanма тухнине чӑнах та ырламалла. Епле пулсан та ку енĕпе тĕслĕх илмелли ертӳçĕсем районта чылай.

Пурĕ вара ӑмӑртӑва 57 команда пухӑнчĕ. Малтанах учительсен командисем, вĕсем хыççӑн предприятисен, организацисемпе учрежденисен командисем, кайран район администрацийĕн пайĕсен тата ял тӑрӑхĕсен командисем йĕлтĕр йĕрĕ çине тухрĕç. Çапла майпа пĕрин хыççӑн тепри пĕтĕмпе виçĕ старт пулчĕ.

Кашни стартрах пĕрремĕш-иккĕмĕш тапхӑр хыççӑн малти вырӑнсене кам тухасси палӑрчĕ.

Москакассинчи вӑтам шкулӑн, «Свобода» хуçалӑхӑн, районти шалти ĕçсен пайĕпе Ярапайкассинчи ял тӑрӑхĕн командисем çĕнтерӳçĕсен ятне тивĕçрĕç. Иккĕмĕш вырӑнсенче Шурчари тĕп шкулӑн, «Ударник» хуçалӑхӑн тата Çатракассинчи ял тӑрӑхĕн командисем. Виççĕмĕшсем çаксем пулчĕç: Калайкассинчи вӑтам шкул, «Передовик» хуçалӑх тата Катькас ял тӑрӑхĕ.

Ертӳçĕсен чупӑвĕнче старта пĕтĕмпе 40 çын тухрĕ, вӑйлисем вара çаксем: Хорнуй ял тӑрӑхĕн пуçлӑхĕ М. Колесникова (1-мĕш вырӑн), Шурчари тĕп шкул директорĕ Л. Кудашова (2-мĕш), Чӑваш Республики тӑрӑх Раççейри ФНС районсем хушшинчи 6 № инспекци пуçлӑхĕн çумĕ Л. Михайлова (3-мĕш), «Ударник» хуçалӑхӑн тĕп агрономĕ А. Васильев (1-мĕш), М. Романов уйрӑм предприниматель (2-мĕш) тата «Сывлӑх» ФСК директорĕн çумĕ А. Слепнев (3-мĕш).

Дипломсемпе хаклӑ парнесене мала тухнисем кӑна мар, уйрӑмах тӑрӑшуллӑ пулнисем те тивĕçрĕç. Çапла Хорнуй ял тӑрӑхĕнчи Т. Александровӑпа Муркаш ял тӑрӑхĕнчи Н. Антонов спорт ветеранĕсем те парнесемсĕр юлмарĕç. Район администрацийĕн экономика пайĕн пуçлӑхĕ Э. Симакова, Орининти вӑтам шкул директорĕ В. Иванов та уйрӑм парнене тивĕçрĕç. Спонсорсемпе судьясем пĕр шухӑшлӑ пулса «Свобода» хуçалӑх ертӳçине В. Ананьева, Москакасси ял тӑрӑхĕн пуçлӑхне А. Матросова та парнесем парса чысларĕç. Муркаш ял тӑрӑхĕн, Муркашри тĕп больницӑн, ФСК, налук инспекцийĕн тата район администрацийĕн финанс пайĕн командисем те спорт уявĕнче парнеллĕ пулчĕç. «Алмаз-Холдинг» пĕрлешӳ вара район администрацийĕн пуçлӑхне Ю. Иванова тата çак ӑмӑртӑва пуçарса яракан В. Вязова кĕмĕл медальсем парса хавхалантарчĕ. Йĕлтĕр йĕрĕ хатĕрлесе панӑшӑн В. Егорова ячĕллĕ спорт шкулне сĕтел-пукан илме 3 пин тенкĕлĕх сертификат пачĕç.

Хĕллехи сезон хаваслӑн вĕçленчĕ. Умра вара ӑмӑртусем чылай.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

## Тав сӑмахĕ

Тереç ялĕнче пурӑннӑ Николай Спиридонович Шишокина юлашки çула ӑсатма пулӑшнӑшӑн, йывӑр хуйха пирĕнпе пайланӑшӑн район администрацийĕн пуçлӑхне Ю.А. Иванова, унӑн çумĕсене, вӑл ертсе пыракан коллектива, ял хуçалӑх предприятийĕсемпе учрежденийĕсен коллективĕсене, ял тӑрӑхĕсен пуçлӑхĕсене, ял-йыша, тус-юлташсене, пускилсене, тӑвансене, унта пынӑ пĕтĕм халӑха чун-чĕререн тав тӑватпӑр.

**Шишокинсен çемйи.**

## Пĕлтерӳсем. Объявления


**Требуются механизаторы на трактора Т-150К. Тел.: 62-6-70, 8-952-029-80-03.**

* * *

**Продаю конную телегу на резиновых колесах. Мопед «Верховина» без колес. Тел.: 8-906-133-29-55.**

* * *

**Куплю автомобили любой марки, в любом состоянии. Постоянно. Тел.: 89196645058.**

* * *

**Комбикорма, отруби, ячмень. Доставка от 1 т. Тел.: 89279920519. 1-5.**

* * *

**Спутниковое ТВ. Установка в короткие сроки. Качество, гарантие, обслуживание. Тел.: 89278527475. 1-2.**

* * *

**Парикмахерская «ШАРМ» оказывает все виды парикмахерских услуг. Любая жен. и муж. стрижка – 100 руб., дет. – 50 руб. Покупает волосы.**

**Ремонт стиральных машин-автоматов с выездом на дом. Тел.: 8-962-599-04-70, 8-953-010-21-34.**

* * *

**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно. Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-656-13-84. 1-5.**

* * *

**Ĕне, вӑкӑр, пӑру туянатӑп. Тел.: 60-7-10, 8-905-343-60-63. 5-5.**

* * *

**Продаю сено в рулонах. Тел.: 8-905-342-42-10.**

* * *

**Продаем сено и солому в тюках и рулонах. Доставка или самовывоз. Тел.: 89603138668, 89063872342.**

* * *

**Куплю старинные монеты, советские монеты до 1961 г., бумажные купюры до 1961 г., колокольчики, самовары, чувашские наряды с монетами. Дорого. Тел.: 89277657652.**

* * *

**Продаем: культиваторы: КПЭ-3,8, КПС-4; сеялки: СЗ-3,6; БДТ-7, БДТ-3; ДТ-75 – бульдозер, ДТ-75 – пропашной, Т-150 (дв. СМД); экскаватор ЭО–3323А; а/м ГАЗ-53Б, Урал – «сельхоз», УАЗ. Тел.: 62-6-70, 8-952-029-80-03.**





Районти «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕн коллективĕ ял хуçалӑх пайĕн ертӳçин А.П. Беловӑн амӑшĕ

**Зоя Павловна**
**БЕЛОВА**

вилсе кайнӑ пирки вĕсен çемйипе тата тӑванĕсемпе пĕрле чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет.

---

УКС, архитектуры и ЖКХ администрации Моргаушского района выражает глубокое соболезнование Аникиной В.А. по поводу кончины

**ОТЦА.**

---

ООО «Управляющая компания ЖКХ» Моргаушского района выражает глубокое соболезнование специалисту УКС, архитектуры и ЖКХ администрации Моргаушского района Аникиной В.А. в связи с невосполнимой утратой - кончиной

**ОТЦА.**

---

Коллектив ФСК «Сывлӑх» выражает глубокое соболезнование Беловой И.Н. и Белову А.П. в связи с безвременной кончиной свекрови и матери

**БЕЛОВОЙ**
**Зои Павловны.**

---

«СПК-племзавод «Свобода» правленийĕ

**Зоя Павловна**
**БЕЛОВА**

пенсионерка вилсе кайнӑ пирки унӑн çывӑх тӑванĕсемпе пĕрле чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет.

---

Кашмашри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкул коллективĕпе вĕренекенсем кунта пуçламӑш классене вĕрентекен Е.П. Павловӑн амӑшĕ

**Зоя Павловна**
**БЕЛОВА**

вилсе кайнӑ пирки унӑн çемйипе тата çывӑх тӑванĕсемпе пĕрле чĕререн хурланни çинчен пĕлтерĕççĕ.

---

Шупашкарти «Альфа-Агро» чикĕллĕ яваплӑхлӑ общество коллективĕ коммерциллĕ директор çумĕн С.П. Беловӑн амӑшĕ

**Зоя Павловна**
**БЕЛОВА**

вилсе кайнӑ пирки вĕсен çемйипе тата çывӑх тӑванĕсемпе пĕрле тарӑннӑн хурланни çинчен пĕлтерет.

---

## Редакци почтинчен

## Аннесене – ӑшӑ кӑмӑл

Ильинкӑри вӑтам шкулта 2 тата 4 классенче вĕренекенсен шкул пурнӑçĕнче интересли нумай пулса иртет. Акӑ Пĕтĕм тĕнчери хĕрарӑмсен кунне халалланӑ уява ирттерме те ашшĕ-амӑшĕ шкула пухӑнчĕ. Хӑйсен ачисемпе пĕрле уява хутшӑнма кӑмӑл туни çурхи хĕвеллĕ çанталӑк евĕр пурне те ӑшӑ кӑмӑл парнелерĕ.

«Килти ĕçе» пурнӑçласа амӑшĕпе хĕрĕнчен тӑракан командӑсем мĕнпе кӑна савӑнтармарĕç пуль. Çемьесен çинчен калакан презентацисем те пăхрӑмӑр, плакатсемпе те, хӑйсем çырнӑ сӑвӑсемпе те паллашрӑмӑр. Апат-çимĕç хатĕрлессипе те, çи-пуç ӑсталассипе те маттур пулчĕç пикесем. Хĕр ачасем тĕрлĕ тумтир тӑхӑнса прическӑсемпе те паллаштарчĕç. Такмаксен конкурсĕ те, ытти конкурссем те питĕ хаваслӑ иртрĕç. Конкурссенче командӑсене арçын ачасемпе ашшĕсем хавхалантарса тӑчĕç. Уявра кашни амӑшĕпе хĕрĕ парнепе диплома тивĕçрĕ. Ачасем амӑшĕсене хӑйсем ӑсталанӑ парнесемпе те савӑнтарчĕç.

**Г. АНИСОВА.**

## Спартакиадӑра – хĕрарӑмсем

Çак кунсенче Шетмĕпуç ял тӑрӑхĕнчи хĕрарӑмсен канашĕн председателĕн кубокне çĕнсе илессишĕн ку тӑрӑхри хĕрарӑмсен спартакиади иртрĕ. Унта пурĕ 5 команда хутшӑнчĕ. Программӑра спортӑн тĕрлĕ енĕсем пулчĕç: эстафета, канат туртасси, шашкӑлла выляси тата футбол. Спорт уявне хĕрарӑмсен канашĕн председателĕ В. Никитина уçрĕ. Унпа пĕрле ял тӑрӑхĕн ертӳçи Н.П. Александров, депутатсен районти Пухӑвĕн депутачĕ А.П. Давыдов та хĕрарӑмсене саламларĕç.

Эстафетӑра Тивĕш пикисем мала тухрĕç. Футбол вӑййинче вара Автанкассисене çитекенни пулмарĕ. Канат туртассинче Тивĕшсен команди каллех çĕнтерчĕ. Шашкӑлла выляса Катӑкуйĕнчи Г. Васильевӑна никам та çĕнтереймерĕ. Спартакиадӑн пĕтĕмĕшле кӑтартӑвĕ тӑрӑх Тивĕшсем мала тухни палӑрчĕ, вĕсем хыççӑн – Катӑкуйсемпе Турхансем. Автанкассисемпе Сарчаксен командисем те хастарлӑх кӑтартса куракансене савӑнтарчĕç.

Спартакиада спонсорĕ – хĕрарӑмсен канашĕн председателĕ В. Никитина – маттур пикесене парнесем, дипломсем парса чысларĕ. Ӑмӑртӑва ирттерме пулӑшнӑшӑн вӑл ял тӑрӑхĕн пуçлӑхне Н.П. Александрова, Е.С. Степанов эксперт специалиста, О.Н. Ильина, И.А. Смирнова тата А.И. Васильева тав сӑмахĕ калать.

**В. НИКИТИНА,**
**хĕрарӑмсен канашĕн ертӳçи.**

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:110101:152, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Орининское сельское поселение, участок расположен в юго-западной части кадастрового квартала 21:17:110101, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 4000 кв.м.;

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.


**18 марта с 8-00 до 16-00 часов Ульяновская обувная фабрика проводит выставку-продажу обуви из натуральной кожи Ульяновской, Беларусской фабрик и других российских производителей. 3-6.**

**Продается сено в тюках, в неограниченном количестве, с доставкой. Сено местное, непривозное, высокого качества.**
**Тел.: 8-906-384-48-30. Сергей.**
**Тел.: 8-927-990-39-08. Вася. 1-5.**

**СОТОВЫЙ ПОЛИКАРБОНАТ**
**Приглашаем к сотрудничеству оптовиков и ИП.**
**Тел.: (8352) 63-69-08, 28-34-90.**


**Постановление главы администрации**
**Ильинского сельского поселения**
**№ 14 от 10 марта 2011 года**

**О проведении публичных слушаний по проекту решения по проекту муниципального правового акта «Об изменении разрешенного использования земельного участка»**

В соответствии со ст. 28 Закона Российской Федерации от 06.10.2003г. №131-ФЗ «Об общих принципах организации местного самоуправления в Российской Федерации», ст. 14 Устава Ильинского сельского поселения Моргаушского района ЧР **ПОСТАНОВЛЯЮ:**

1. Провести публичные слушания по проекту муниципального правового акта «Об изменении разрешенного использования земельного участка» 23 марта 2011 года в 10 часов 00 минут в здании администрации Апчарского СДК по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, д. Апчары, улица Центральная, дом 35.
2. Настоящее постановление подлежит официальному опубликованию в районной газете «Знамя победы».

**Глава администрации Ильинского сельского поселения**
**Ю.В. ПЕРЦЕВ.**

**Проект муниципального правового акта**
**Об изменении разрешенного использования земельного участка**

Руководствуясь п.10 ст.3 Федерального закона от 25 октября 2001 года №137-ФЗ «О введении в действие Земельного кодекса Российской Федерации», с учетом результатов публичных слушаний постановляю:

изменить разрешенное использование земельного участка с кадастровым номером 21:17:020901:58, из категории «земли населенных пунктов», местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ильинское сельское поселение, д. Апчары, ул. Центральная, д. 36 общей площадью 8000 кв.м. с «для содержания Апчарской начальной школы» на «для ведения личного подсобного хозяйства».

С предложениями по проекту муниципального правового акта «Об изменении разрешенного использования земельного участка» обращаться в администрацию Ильинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики с 8-00 до 17-00 часов, кроме выходных дней. Последний день приема предложений 23 марта 2011 года до 9-00 часов.


**Муркаш районĕнчи**
**«Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат**

**УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:**
**Чӑваш Республикин Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерстви.**
**ЧР Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерствин «Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ» автономи учрежденийĕ.**

**Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.**

**АДРЕС: 429530, Чӑваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.**
**ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплӑ секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнӑç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллӑ пурнӑç пайĕ - 62-1-38.**
**Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru**

**Çыхӑну, информаци технологийĕсен тата массӑллӑ коммуникаци сферине пӑхса тӑракан Федераллӑ службӑн Чӑваш Республикипе – Чӑваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2009 çулхи раштавӑн 7-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00073 № регистрациленĕ.**

**Калӑпӑшĕ 1 пичет листи.**
**Ал çырӑвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавӑрса памаççĕ, 2 страницӑран пысӑкраххисене йышӑнмаççĕ.**
**Рекламӑпа пĕлтерӳсен чӑнлӑхĕшĕн вĕсене паракансем яваплӑ.**

**ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.**
**Хаçат чӑвашла юн тата шӑмат кунсерен тухать.**
**Номер дежурнӑйĕ Макарова Р.А.**
**Пичете панӑ 15.03.2011 ç.**
**Пичете памалли вӑхӑт: графикпа – 17 сех. 20 мин, чӑннипе – 17 сех. 20 мин.**
**Заказ Тираж 4329.**

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.